Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

2 (7856) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 15-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Хĕл варринчи чечек тĕнчи...



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Светлана Сильвестровна Шапошникова пек тăван ене тата çĕр ĕçне юратакансем пулсан ялсем çĕнелесси, садсем илемленесси пирки иккĕленӳ çук. Килти хушма хуçалăхра чечек тĕнчине атлантарассипе чунне парса ĕçлекен хĕрарăм пирки хаçатăн 5-мĕш страницинче вуласа пĕлме пултаратăр.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Официаллă

## Медальпе наградăланă

Чăваш Енри Шалти ĕçсен министерстви çине хунă задачăсене пурнăçлама пулăшу панăшăн Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министрĕн 2010 çулхи январĕн 11-мĕшĕнчи 71 № хушăвĕпе Муркаш район администрацийĕн пуçлăхне **Юрий Александрович ИВАНОВА** «Чăваш милицине 90 çул» медальпе наградăланă.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

## Сăвăм пирки

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайне кăрлачăн 15-мĕшĕ тĕлне ял хуçалăх производство кооперативĕсенчен тăратнă оперативлă кăтартусемпе пĕтĕмпе 2156 пуç (пĕлтĕр – 2115 пуç) сумалли ĕне пулнă.

Асăннă кун тĕлне кашни ĕне пуçне вăтамран 10,1 килограмм (пĕлтĕр – 10,8 кг) сĕт сунă.

Паянхи куна чи пысăк сăвăм Суворов яч. хис. хуçалăхра: 14,8 кг. Иккĕмĕш вырăна 13,6 кг сĕт суса Orининсем йышăнаççĕ. «Свобода», «Ударник», «Передовик» хуçалăхсенче те вăтам сăвăм 10 кг ытла.

Чи пĕчĕк кăтарту Чапаев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче: ĕне пуçне вăтамран 4,7 кг сĕт сăваççĕ.

**Хамăр инф.**

**ХИСЕПЛĔ КАЛЕМ ĂСТИСЕМ, ПОЛИГРАФИ ПРЕДПРИЯТИЙĕСЕН ТАТА ХАÇАТ-ЖУРНАЛ САЛАТАКАН СЛУЖБĂСЕН ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Хальхи тĕнче вăл – информацин питĕ пысăк анлăшĕ. Сирĕн нумай енлĕ ĕç кăтартăвĕсем паян кашни сферăрах кирлĕ. Эсир тăван Чăваш Ене ăнăçлă аталантармалли вăй пулса тăратăр. Эсир ырми-канми вăй хунипе тата профессионализма пула республикăра тăнăç тата пахалăхлă информаци анлăшне туса хунă. Информацисен калăпăшĕпе тĕрĕслĕх тĕп вырăнта пулса тăраççĕ.

Сирĕн ĕç кăткăс та ответлă. Эсир чи çинçе структурăпа – сăмахпа ĕçлетĕр. Унăн вăйĕ вара калама çук пысăк. Пысăк калăпăшлă информацие те пĕчĕк формăна шăнăçтарма пултаратăр. Информаци технологийĕсем анлă аталаннă тапхăрта çут ĕçĕн пĕлтерĕшлĕ вăйĕ пулса тăратăр, пире çĕнĕ хыпарсемпе паллаштаратăр, вăхăтпа тан пыма пулăшатăр. Грексем авалах «Илемлĕ калама пултарни – ăнлантарăвăн никĕсĕ» тесе калани пур. Журналистсен яр усă пултарулăхĕпе эсир çынсен обществăлла ăнланăвĕ çине витĕм кӳретĕр, пурнăçа çĕнĕлле курма вĕрентетĕр.

Чăваш публицисчĕ тата ученăйĕ Николай Васильевич Никольский пуçăннă ĕçе ăнăçлă аталантарса пырса эсир ĕмĕрхи темăсене çутататăр. Кусем вĕсем тăван тавралăха юратасси, лайăххине шанасси, пирĕн тĕнчере çыннăн пĕлтерĕшне ăнланасси. Шанса тăратăп, çырав ĕçченĕсен пуян еткерлĕхĕ журналистикăра çĕнĕ, тарăн пĕлтерĕшлĕ тата нравственноç енчен пысăк шайра тăракан ĕçсем кун çути курма май парĕ.

Пирĕн ĕçри килĕшӳ малашне те аталанса тата çирĕпленсе пырасса шанатăп. Малашне те ответлă, тĕрĕслĕх, пысăк профессионализм тата гражданла активлă позици сирĕн ĕçĕн тĕп принципĕсем пулса юлĕç.

Пур журналистсене, редакцисен сотрудникĕсене, полиграфи предприятийĕсен тата изданисене вулакансем патне çитерекен службăсен ĕçченĕсене хайсен ĕçне чуна парса пурнăçланăшăн тав сăмахĕ калатăп. Сире ырă сывлăх, творчество ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем, вулакансен юратăвне сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнчи 1026 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Галина Георгиевна АЛЕКСАНДРОВĂНА**, «Ударник» хуçалăхăн вылăх-чĕрлĕх енĕпе ĕçлекен бухгалтерне;

– нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн **Маргарита Михайловна ИСАКОВĂНА,** Хорнуй ял тăрăхĕн администрацийĕн тĕп эксперт специалистне.

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнчи 1031 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Елена Владимировна НИКОЛАЕВĂНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин хушма ĕçченне;

– **Валентина Николаевна ЗАЙЦЕВĂНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин хушма ĕçченне.

Районăн экономикăпа социаллă аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçе активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи январĕн 11-мĕшĕнчи 1 № йышăнăвĕпе районти потребительсен обществин Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председательне **Людмила Петровна МАЙКОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Демографи

## 13 ача ытларах çуралнă

Çулталăк вĕçленчĕ, апла пулсан хăш-пĕр ĕçе пĕтĕмлетме те вăхăт çитрĕ. Пурнăçра эпир ырри пирки ытларах ĕмĕтленетпĕр-çке. Иртнĕ çул районта 420 ача кун çути курчĕ. 2009 çул вара ку кăтарту 407 çынпа танлашнă. Ача йышĕ хутшăнни паллах пире пурне те савăнтарать. Муркаш ял тăрăхĕнче 74 ача çуралнă, Москакасси ял тăрăхĕнче 42 çĕнĕ кайăк ăшă çемьене вĕçсе килнĕ. Çатракасси ял тăрăхĕнче 35 ача кун çути курнă.

Шел пулин те пурнăçран уйрăлакансен йышĕ 663 çын пулнă. 2009 çулта вара ку кăтарту 619 çынпа танлашнă. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче 96 çын вилнĕ. Ильинка ял тăрăхĕнче 54-ăн пурнăçран уйрăлнă. Муркаш ял тăрăхĕнче вара çут тĕнчерен уйрăлакансем 52-ĕн пулнă.

Çĕнĕ çемье çавăракансем иртнĕ çулхипе танлаштарсан сахалтарах. 2009 çулта 210 çемье пулнă. 2010 çулта вара 190 мăшăр кăна пĕрлешме шутланă. Çав хушăрах 84 çемье арканнă. Ку кăтарту 2009 çулта та çав шайрах пулнă. Çатракасси ял тăрăхĕнчи çемьесем ытларах арканнă.

**М. РУБЦОВА,**
**ЗАГС уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Конкурс

## Хăшĕн сайчĕ ăнăçлăрах?

Вырăнти самоуправлени органĕсен ĕçнехĕлне уççăнрах çутатас, вĕсем тивĕçтерекен муниципаллă услугăсем пирки Интернетăн информаципе телекоммуникаци сечĕпе туллинрех пĕлтерсе тăрас тĕллевпе ял тăрăхĕсен официаллă сайчĕсен «Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсен чи лайăх сайчĕ – 2011» конкурс ирттереççĕ. Вăл кăçалхи январĕн 11-мĕшĕнчен тытăнса апрелĕн 25-мĕшĕччен иртет.

Конкурса районти ял тăрăхĕсен 16 сайчĕ хутшăнать. Конкурс номинацийĕсем – «Чи лайăх сайт», «Сайтăн чи лайăх дизайнĕ», «Чи нумай усă куракан сайт».

Конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ чухне жюри сайтсен пĕлтерĕшĕпе анлăшне, дизайнне, унпа мĕн чухлĕ çын усă курнине шута илет.

Ял тăрăхĕсен сайчĕсен конкурсне районта иккĕмĕш хут ирттереççĕ. Пĕрремĕш конкурс иртнĕ çулта пулнăччĕ. Ун чухне «Чи лайăх сайт» номинацире Ильинка ял тăрăхĕн сайчĕ 1-мĕш вырăна, Турай ял тăрăхĕн сайчĕ 2-мĕш вырăна, Уйкас Янасал ял тăрăхĕн сайчĕ 3-мĕш вырăна тивĕçме пултарнăччĕ.

«Сайтăн чи лайăх дизайнĕ» номинацире Юнкă ял тăрăхĕн, «Чи нумай усă куракан сайт» номинацире Муркаш ял тăрăхĕн сайчĕсем çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă.

**Хамăр инф.**

Кăшальня

## Служба вăхăтĕнче асăрханулла пулăр

Январĕн 19-мĕшĕнче православи тĕнне ĕненекенсемшĕн пысăк уяв – Иисус Христос Турăна тĕне кĕртнĕ кун. Çавна май январĕн 18-19-мĕшĕсенче район территорийĕнчи чиркӳсемпе кĕлĕ çурчĕсене пухăнакансене асăрханулăх пирки аса илтеретпĕр. Сивĕ, сывлăшри нӳрĕк пысăк пулни, пĕвесем сывăхĕнче çынсене тăма хуплăнчăк вырăнсем çукки, алкоголе ытларах ĕçни тата ытти хăшпĕр сăлтавсем тимлĕ пулма ыйтаççĕ.

Район администрацийĕн гражданла оборонăпа чрезвычайлă лару-тăру секторĕн ертӳçин Н. Милютинăн сĕнĕвĕсем çапла. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен вырăнти чиркӳсен е кĕлĕ çурчĕсен настоятелĕсемпе пĕрле шыва кĕмелли вырăна палăртса çынсем валли хывăнса тăхăнмалли кабинăсем вырнаçтармалла. Служба вăхăтĕнче вĕри чей те хатĕрлемелле.

Пăр çинче çынсен асăрханулăхне шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем, медицина ĕçченĕсем тата халăх дружинникĕсем сыхлассине йĕркелемелле. Шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов пĕлтернĕ тăрăх службăсен иртекен кашни вырăнтах дежурствăра милици сотрудникĕсем пулаççĕ.

Пĕлтĕрхи шăрăха пула шыв кирлĕ чухлĕ сивĕнсе çитменнипе пăр хулăн шăнман. Çавăнпа та кашнинех хăрушсăрлăх пирки шухăшламалла.

Енчен те инкек пулчĕ пулсан çынна сивĕ шывран туртса кăлармалла. Ăшă (вĕри мунчана мар!) пӳлĕме илсе кĕмелле. Йĕпе çи-пуçне хывса типпине, пуç çине калпак тăхăнтартмалла. Çиелтен хулăн утиялпа чĕркемелле. Вĕри чей е шыв ĕçтермелле. Ăшă парса тăракан хатĕрсене ĕнсе, кăкăрсем çине, хул хушшисем тĕлĕнче тытмалла. Малтанах кĕлеткене ăшăтмалла, кайран – урасемпе алăсене. Çыннăн сывлăхĕ хăрушлăхра пулсан çийĕнчех медицина пулăшăвĕ памалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Профилактика ĕçне вăйлатмалла

**Шалти ĕçсен пайĕнче**

***Районти шалти ĕçсен пайĕн иртнĕ çулхи ĕç-хĕлне тишкерсе хак пама, малаллахи утăмсем пирки сӳтсе явма юн кун Муркаша Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕ В. Антонов килсе çитрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов та ларăва хутшăнчĕ.***

Кашни тухса калаçакана министр реформа пынă тапхăрта вĕсем хăйсен ĕçĕн малашнехи çулйĕрне епле курнине, палăртнине пĕлтерме сĕнчĕ. Çакăнтан пуçласа лару чăн-чăн ĕçлĕ калаçăва куçрĕ, пĕр енлĕн кăна пулмарĕ.

Пирĕн район территорийĕнче хулиганла ĕçсем тăвакан ушкăнсем палăрни, вĕсем пĕр хутчен кăна мар тата тĕрлĕ енлĕ преступлени туни, çĕнĕрен те çĕнĕ хушаматсем «çутални» – акă мĕн уйăрса тăрать иккен Муркаш районне республика шайĕнче. Кун пек лару-тăру Шупашкар хулинче тата республикăн кăнтăр районĕсенче ытларах вăй илнĕ. Апла пулсан районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсен хăйсен тивĕçĕсене пахалăхлăрах пурнăçламалли пĕлтерĕшлĕ пулнине те асăнчĕ В. Антонов.

Иртнĕ çулталăкăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсемпе районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов паллаштарчĕ. Пурĕ 392 преступлени регистрациленĕ, 86,2 процентне уçса панă. Вĕсенчен 158-шĕ – ют çын пурлăхне вăрлани. Йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисен хисепĕ ӳсни те пăшăрхантаракан пулăм. Вĕсене уçса парасси ӳснĕ пулин те çакнашкал преступленисем пурри пакунлисене эффективлăрах мелсем тупма хистет.

Лару-тăру пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулма пултарайманнине министр та ăнланать. Кашни преступление уçса пани – чылай сотрудникăн ĕçĕ. Çавăнпа та министр йĕркене пăсни çинчен информаци мĕнле майпа çитнипе, унпа мĕнле ĕçлеме пуçланипе те кăсăкланчĕ. Йĕркене пăсни çинчен килекен хыпарсем тĕлĕшпе çийĕнчех ĕçлеме тытăнсан çеç халăхăн шанчăкĕ çухалмасть. Апла ĕçри дисциплина та çирĕп пулмалла. Халĕ, реформа вăхăтĕнче, çакăн çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрни паллă. Штат чакать пулин те шалти ĕçсен пайĕн ĕçĕ, тивĕçĕсем çавсемех юлаççĕ.

Пирĕн район Шупашкар çывăхĕнче вырнаçнăран канмалли кунсенче тĕп хулана «канма» кайса килекенсемпе те тĕплĕнрех ĕçлеме палăртрĕç ларура. Наркотиксен тата хĕç-пăшалăн саккунсăр çаврăнăшĕ тĕлĕшпе те лару-тăру çирĕпрех тишкерӳсем ыйтать. Темиçе хут преступлени тунисемпе шалти ĕçсен пайĕ районти хăй тытăмлăх органĕсемпе çыхăнса ĕçлеме палăртрĕ. Тĕпрен илсен вара профилактика ĕçне татах та вăйлатма, çирĕплетме тивет: преступленисене асăрхаттарма тăрăшмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**



**Милици хроникинчен**

## Алăсем «çӳлте», апла – пуçсенче пушă

Çĕнĕ çул уявĕпе канмалли кунсем вунă куна тăсăлни районти пурнăç лăпкăрах пулнине пĕлтермерĕ. Кунсерен шалти ĕçсен пайне çемьесенче харкашусем, хирĕçӳсем пулни çинчен хыпарсем килчĕç.

Ытларах чух вĕсем эрех кĕленчинчен пуçланнисемех. Вăй виçессипе вара хĕрарăмсем те, арçынсем те маттур. Пĕр-пĕрне алă-урапа çеç мар, алла мĕн лекнĕ çавăнпа «тăн параççĕ». Москакассинче пурăнакан хĕрарăм, сăмахран, хăйне хĕненĕ хыççăн упăшкине çĕçĕпе темиçе çĕртен те тирсе пĕтерет. Кармăшра пурăнакан арçын вара пĕрле пурăнакан хĕрарăма хыççăр пуканпа пуçĕнчен тăватă хутчен çапать. Анчах та çапла тунипе пурнăç лайăх енне улшăнмасть пулĕ.

## Вăрăсемшĕн уяв çук

Иртнĕ кунсенче Муркашра вырнаçнă пĕр пĕрлешӳ цехĕнчен 16 çулхи «маттур» каччă сварка аппаратне вăрласа тухнă. Ăна тупса палăртнă ĕнтĕ. Малта – уголовлă статьяпа килĕшӳллĕн явап тытасси.

Етĕрне районĕнчен килнĕ амăшĕпе хĕрĕ Уйкас Янасал ял тăрăхне кĕрекен Купăрля ялне «хăнана» килнĕ. Кил хуçине хăратса, вăл хирĕçленине пăхмасăр вăрăсем темĕн те вăрласа тухнă: компьютертан пуçласа тутăхман тимĕртен тунă кашăксем таранах! Кил хуçисене 40 пин тенкĕ майлах тăкак кӳнĕ. Ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**Православи уявĕсем**

## Пур чиркӳре те кĕлĕсем иртĕç

Январĕн 19-мĕшĕ. Çак кун Иисус Христос Турăна тĕне кĕртнĕ кун пулнипе паллă. «Çавăн чухне Иисус Галилейран Иордан хĕррине Иоанн патне шыва кĕме пынă. Иоанн Ăна чарса: «Санăн мана шыва кĕртмелле, Эсĕ ху ман пата килтĕн-и?» – тенĕ. Иисус ăна хирĕç: «Ан чар халĕ, пирĕн пур тĕрĕслĕхе те çапла тума кирлĕ», – тенĕ. Иоанн вара Ăна чарман. Иисус шыва часах кĕрсе тухнă. Çав вăхăтра Иоанн Турă Сывлăшĕ кăвакарчăн пек курăнса Иисус çине аннине курнă. Тата çӳлтен: «Çакă манăн савнă Ывăлăм, Манăн ирĕкĕм Ун çинче» тесе каланă сасă илтнĕ».

Çак пайра Иисус Христос Турăна тĕне кĕртнĕ кунăн пĕлтерĕшĕ. Христос Турă çынран – Иоанн Креститель çветтуйĕнчен – тĕне кĕнĕ. Çапла туса вăл «пур тĕрĕслĕхе те тунă», тĕне кĕртессин малашлăхне сăваплатса панă.

Çак пысăк та чăннипех сăваплă уяв ячĕпе пĕтĕм чиркӳсенче кĕлĕсем пулаççĕ.

**Спорт**

## Сурхури ăмăртăвĕсенче

Январĕн 6–7-мĕшĕсенче Шупашкарта йĕлтĕрçĕсен йăлана кĕнĕ «Сурхури ăмăртăвĕ» иртрĕ. Унта пирĕн районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ çулсерен хутшăнать. Кăçал та çак спорт шкулĕнче вăй хуракан Э.А. Гордеев тренерăн (Ярапайкасси уйрăмĕ) 8 воспитанникĕ, В.Т. Моисеев тренер (Калайкасси уйрăмĕ) патĕнче ăсталăха туптакан 7 çамрăк йĕлтĕрçĕ хутшăнчĕç.

10 çухрăма ирĕклĕ майпа йĕлтĕрпе чупса Анастасия Костина (Ярапайкасси) 1-мĕш вырăна тухма пултарнă. Вăлах классика мелĕпе 5 çухрăмлă дистанцире те çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Çак уйрăмрах ăсталăха туптакан Светлана Соколова 3 çухрăмлă дистанцие тăваттăмĕш чупса тухма вăй çитерни те шанăç çуратать.

**Хамăр инф.**

**Объявления**

Я, собственник земельной доли Сальникова Валентина Николаевна, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 2,92 га пашни, расположенного на территории землепользования СПК «Восток» Моргаушского района Чувашской Республики, Орининского сельского поселения, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:110301.

Мы, собственники земельных долей Сальников В.М., Сальников В.В., объявляем о выделении земельных участко в счет земельной доли площадью по 1,46 га пашни каждый, расположенных на территории землепользования СПК «Восток» Моргаушского района Чувашской Республики, Орининского сельского поселения, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:110301.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Орининского сельского поселения.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории СПК «Восток» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, в южной части кадастрового квартала 21:17:110301.

Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Сальников Виталий Михайлович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Молгачкасы. Паспорт серии 9700 № 209596 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 17.07.2001 г.; гр. Сальников Владимир Витальевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Молгачкасы. Паспорт серии 9700 № 134427 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 10.05.1975 г.; гр. Сальникова Валентина Николаевна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Молгачкасы. Паспорт серии 9700 № 209597 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 17.07.2001 г.

Согласование местоположения границ состоится 15.02.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, ООО «Земля».

В объявлении собственников земельных долей, опубликованном В №№ 109-110 (7851-7852) от 25 декабря 2010 года на 5 стр. в конце текста добавить: «Согласование местоположения границ состоится 25.01.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

* * *

Я, собственник земельной доли Волков Николай Александрович, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 13800 кв. м. пашни, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Сеятель» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярославского сельского поселения, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:130501.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ярославского сельского поселения.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Сеятель» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, в центральной части кадастрового квартала 21:17:130501.

Заказчик работ, собственник в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Волков Николай Александрович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Ярославка. Паспорт серии 9709 № 727069 выдан ТП УФМС России по ЧР в Моргаушском районе от 27.06.2009 г.

Согласование местоположения границ состоится 15.02.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**ФИЗКУЛЬТУРНО-СПОРТИВНЫЙ КОМПЛЕКС «СЫВЛĂХ» С. МОРГАУШИ ПРЕДЛАГАЕТ ВАШИМ УСЛУГАМ:**
- Спортивный зал – для проведения спортивно-массовых мероприятий.
- Атлетический зал – для проведения занятий по пауэрлифтингу, тяжелой атлетике, фитнесу.
- Бассейн на три дорожки – 25 метров.
- Зал аэробики и фитнеса.
- Настольный теннис и бильярд.
- Стандартную хоккейную площадку.
- Освещаемый в вечернее время каток (в зимний период).
- Комплексную спортивную площадку (в летний период).
- Прокат коньков и лыж.
- Катание на катамаранах на естественном пруду вокруг великолепного фонтана.
- Зал для занятий вольной и классической борьбой, восточными единоборствами.
- Зал для занятий боксом, оборудованный профессиональным рингом.
- Сауна (финская).

**ПРИГЛАШАЕМ К СОТРУДНИЧЕСТВУ ОРГАНИЗАЦИИ, ПРЕДПРИЯТИЯ, УЧРЕЖДЕНИЯ РАЗЛИЧНЫХ ФОРМ СОБСТВЕННОСТИ И ЧАСТНЫХ ЛИЦ**

**ДЕЙСТВУЕТ СИСТЕМА ГИБКИХ СКИДОК НА ОКАЗЫВАЕМЫЕ УСЛУГИ:**
- Пенсионерам.
- Ветеранам локальных войн и конфликтов.
- Малообеспеченным семьям.
- Многодетным семьям.
- Инвалидам (по рекомендации врача).

**СУЩЕСТВУЮТ РАЗЛИЧНЫЕ ВИДЫ АБОНЕМЕНТОВ НА ОКАЗЫВАЕМЫЕ УСЛУГИ:**
- Разовые.
- На один месяц 12 посещений для взрослых и детей.
- На один месяц 8 посещений для взрослых и детей.
- На один месяц 4 посещения для взрослых и детей.
- Комплексные абонементы на посещение 2-х видов занятий.
- Комплексные абонементы на посещение 3-х видов занятий.
- Годовые абонементы.
- Корпоративные абонементы.

К вашим услугам комфортные холлы комплекса для проведения корпоративных мероприятий.

Мы всегда рады вам! В здоровом теле – здоровый дух!

Телефоны для справок: 8(83541)62-2-85, 62-3-58, 62-3-75.

Продаем доски хвойные 25х150мм, 50х150мм, 50х200мм; брус любого сечения. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел.: 8-903-346-40-58. 5-10.

**НЕКОММЕРЧЕСКАЯ ОРГАНИЗАЦИЯ «БЛАГОТВОРИТЕЛЬНЫЙ ФОНД «ВОЗРОЖДЕНИЕ ХРАМОВ»**

Основная цель фонда: возрождение Свято-Троицкой православной церкви в с. Оринино Моргаушского района Чувашской Республики.

Также предметом деятельности фонда являются: благотворительная помощь и поддержка инвалидам, сиротам, престарелым гражданам. Зная ваше милосердие и доброту и надеясь на поддержку, обращаемся к вам с просьбой об оказании благотворительной помощи церкви через наш фонд. А фонд наш предлагает свою посильную помощь благотворителям: бесплатная юридическая консультация и представительство; «касса взаимопомощи», при фонде образована касса взаимопомощи, из средств которых будут выделяться благотворительная помощь, а также выделение возвратной беспроцентной материальной помощи до 10 кратного размера. Минимальный благотворительный взнос от 5000 рублей. Благотворителям, пожертвовавшим от 50000 рублей и выше, предлагается скидки при проектировании и строительстве, а также предоставление автотранспорта с оплатой только ГСМ в пределах Чувашии. Также размещаем информацию и остронуждающихся в средствах на сайте церкви и фонда и в рекламных материалах.

Адрес: 429530, РФ, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Гагарина, 2. Тел.: 8-905-342-11-50.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 1-7.

* * *

Февральте тăваттăмĕш пăруламалли хĕрлĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-960-313-71-54, 8-903-346-61-99.

* * *

Продаю корову черно-пестрой масти, четвертый отел в мае. Тел.: 8-906-381-38-76.

* * *

Услуги буровой машины для рытья и углубления колодцев разного диаметра. Тел.: 8-903-379-09-01. 1-5.

* * *

Куплю корову, бычка, телку. Тел.: 8-905-342-39-43. 3-5.

* * *

Куплю бычков, телок и коров. Тел.: 8-919-671-96-26. 4-5.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-10.

Администрация Моргаушского района выражает искреннее соболезнование генеральному директору ООО «Строительный комбинат «ВязПА», члену землячества Вязову П.Н., родным и близким в связи с кончиной супруги

**Светланы Алексеевны.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 14.01.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4275.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.